# Çитĕнÿсем хамăр алăра



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

## Малашлăх кăмăл-туйăмпа тăрăшаççĕ

**Киччĕсем кăçал 178 гектар кĕр тыррисем, 103 гектар урпа, 97 гектар çурхи тулă, 52 гектар сĕлĕ, 60 гектар ытла силослăх кукуруза çитĕнтернĕ, люцернăпа çаран куракĕ пухса кĕртнĕ, люцернăна вăрлăхлăх та çапса илнĕ. Çитес çулхи тухăçшăн тăрăшса кĕрхи тĕш тыр культурисем акса хăварнă. Çаксем пурте малашлăх валли никĕс. Сĕт çулран çул хушăнать. Кăçалхи тăхăр уйăхра, сăмахран, умĕнхи çулхи çав тапхăртинчен 20 процента яхăн ытларах туса илнĕ ăна. Тăватçĕр тоннăна çитнĕ. Ашĕ те нумайрах. Фермăри выльăхсем 66 пуç нумайланнă, пăрусем те чылай ытларах пăрулаттарса илнĕ.**

Хăшĕ-пĕри, тен, тавçăрса та илчĕ пулĕ-ха пирĕн паянхи сăмахăмăр «Кубнинский» агрофирмăпа унти ĕçченсем пирки пынине. Асăннă агрофирма Киччĕ ялĕн çĕрĕ çинче, унччен нумай çул «1-ое Мая» ятпа ĕçлесе пурăннă хуçалăх территорийĕнче, Кĕтне юханшывĕ тăрăхĕнче йĕркеленнĕ. Киччĕ ялĕ шыв хĕрринчи лапамра вырнаçнă, унта асфальтлă çул илсе çитерет, çул айккине çулла та, хĕлле те сип-симĕс тумĕпе тыткăнлакан хырсен тата ытти йывăç-тĕмсен тăрăхĕ тăсăлать. Ял çумĕнченех улăх-çаран сарăлса выртать. Çулла курăк ешерет унта, ăна утăлăх çулса пухаççĕ. Астăватăп, çитмĕлмĕш çулсенче курăка хăвăрт ÿссе аталанма пулăшас тĕллевпе Киччĕ çаранне талккăшпех шăваракан «Волжанка» агрегатсем вырнаçтарнăччĕ. Шывне Кĕтнерен илетчĕç. «1-ое Мая» колхозчĕ ун чухне.

Халĕ вăл вăхăтсем иртсе кайнă ĕнтĕ. Унтанпа нумай шыв юхнă. «Кубнинский» агрофирма та халĕ вăй илсе пыракан предприяти. Вăл ял ĕçнех тăвать: тыră-пулă, утă-улăмпа ытти апат туса илет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Пĕрлех ял çыннисене ĕç вырăнĕпе тивĕçтерет, вĕсене уйăхсерен укçа ĕçлесе илме, тупăш курма май парать.

Иртнĕ ĕмĕрхи тăхăрвуннăмĕш çулсем хыççăн, çĕршывра предприятисем, колхоз-совхозсем арканнă тапхăрта, «1-ое Мая» колхоза та йывăр килнĕ, вăл та тытăнса тăрайман. Çăмăл пулман çав çулсенче ял хуçалăх организацийĕсене – промышленноçпа строительство, электроэнерги хакĕсем ÿсе кайнă, патшалăх пулăшăвĕ çителĕксĕр пулнă тата ытти те. Урăх ертÿçĕ аллине пĕрре кăна мар куçнă хуçалăх. Паянхи хуçасем вара – «Шупашкарти вата фабрики» УАО директорĕсен Канашĕн председателĕ, хамăр районти «Чутеевский» ЯХПК председателĕ Виталий Петрович Гурин тата Çĕрпÿри чăх-чĕп фабрикин ертÿçи Сергей Владимирович Михайлов – киччĕсемшĕн пилĕк çул каялла тупăннă: учредитель пулса производствăна инвестици хывма, вăй хума тытăннă. Укçа-тенкĕне ытларах фермăна çĕклеме янă. Çакă тĕрĕс те пулĕ – выльăх-чĕрлĕхрен çулталăк тăршшĕпех продукци илме, ăна сутса укçа тума, тупăш курма май килет. Маларах асăнтăмăр ĕнтĕ, çакна вырăнĕ те пулăшать: юнашарах Кĕтне юхса выртать, анлă улăх-çаранта çу каça курăк ешерет. Ырлăх-пурлăх ал айĕнче.

Паянхи куна икĕ витене тĕпрен çĕнетнĕ. Ман шутпа, малашлăхра çакăнпа та лăпланса лармĕç. Мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕх йышĕ хушăнсах пырать, производство калăпăшĕ ÿсет, тĕллевсем те ялан малтанхи шайра тăмаççĕ – çĕнелеççĕ, пысăкланаççĕ. Пирвай ĕçе кĕнĕ витере те, халĕ хута кайнинче те выльăхсем тăраççĕ. Икçĕр пуçлăх витере сăвакан ĕнесем усраççĕ. Унтах кĕтĕве çĕнетсе пымалли пушмаксем те пур, пĕтĕлентернисене, тăватă-пилĕкшер пуç, дояркăсем пăхаççĕ, ерттермеллисем тепĕр çын аллинче. Çирĕм кунччензи пăрусем те кунтах уйрăм клеткăсенче паркаланаççĕ. Вĕсене хулăн айсарăм сарса пană. Ĕнесем тăватă ретпе вырнаçнă. Пурте кăкаркăçра. Тĕпрен илсен, хура ула йышшисем. Ку ăратри выльăхсем сĕт лайăх панипе палăрса тăраççĕ. Вĕсене кунне икĕ хутчен машинăпа сăваççĕ. Сĕт пăрăхсем тăрăх тÿрех пысăк холодильнике пырать. Сĕт лайăх антарччăр тесе ĕнесене апатран татăк тăратмаççĕ. Ирлĕ-каçлă сенаж, силос, утă, кунне икĕ хутчен фураж пăраççĕ. Апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, утăулăм рулонсенче упранать, сенажпа кукуруза силосĕ – бетон траншейăсенче. Силос çавăн пекех курганта упранаканни те пур. Фуражлăх тырă – кĕлетре. Унтанах выльăхсем валли çăнăх авăртса параççĕ фермăна. Икĕвиçĕ культура хутăштарса авăртаççĕ. Мĕншĕн сĕт антармалла мар ĕнесен? Витере ăшă, çутă, шыв пур, тислĕк транспортерпа тухать. Выльăхсем тăракан вырăна хăмаран сарса тунă. Ĕнесене виçĕ доярка пăхать. Любовь Александровна Краснова, Светлана Михайловна Иванова, Людмила Николаевна Краснова. «Вĕсем пурте чуна парса ĕçлекенсем»,–терĕ фермăри ĕçсене йĕркелесе пыма пулăшакан Василий Николаевич Волков. Ял çыннисем пĕлеççĕ-ха, хăй вăхăтĕнче вăл агрономпа бригадирта та, колхоз председателĕнче те чылай хушă ĕçленĕ. Дояркăсенчен хăшĕ-пĕринпе çывăхах паллашрăмăр. Акă Любовь Александровнанах илер. Çулпа илсен, хĕрĕх пиллĕксенче вăл. Правур хĕрарăмсенчен пĕри. Ялти тата Амалăхри шкулсенче вĕреннĕ. Вунпĕр класс Тăвайри вăтам шкулта пĕтернĕ. Ун хыççăн тăван ялта «1-ое Мая» колхозри сĕт-çу фермине ĕçлеме пуçланă. Çемьеллĕ. Виçĕ ача амăшĕ. Асли салтак тумне хывнă нумаях пулмасть. Иккĕмĕшĕ – хĕр, вăл Шупашкарти колледжра бухгалтер-экономиста вĕренет, иккĕмĕш курсра халĕ. Кĕçĕнни, Мучарти вăтам шкула çÿрет, улттăмĕш класра вĕренет. Мăшăрĕ Мускава ĕçлеме çÿрет. Кирпĕчрен хăтлă çурт вĕсен. Хăй фермăра пулсан та, килте пысăк хуçалăх тытаççĕ, хăй калană тăрăх, унта та, кунта та ĕлкĕрме тăрăшать. «Икĕ ĕне килте, виççĕмĕшне ÿстеретпĕр. вăкăр та, кроликсем те усратпăр. Чăх-чĕп, кăвакалсем пур»,–терĕ. Фермăна çамрăкрах ашшĕпе амăшне кура сукмак хывнă. Амăшĕ ĕмĕр тăршшĕпех ĕне сунă, ашшĕ оператортă, слесарьте тăрăшнă. Хĕрĕ куллен амăшне пулăшма васкана. «Вунпĕр-вуниккĕрех çирĕм икĕ ĕне таран сунă эпĕ»,–пĕлтерчĕ Любовь Александровна. Амăшĕ, Зоя Павловна Сорокина, халĕ те чиперех пурăнать, кăçал çитмĕл тултарать. Амăшĕ паян кун та ĕне усранине каларĕ хĕрĕ. Любовь Александровна хăйсен ялĕнче «Кубнинский» агрофирма йĕркеленсе кайнăшăн, витесем туса, çĕнĕрен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тытăннăшăн питĕ кăмăллă пулнине пĕлтерчĕ. «Тавах çакăншăн тăрăшнă ертÿçĕсене»,–терĕ.

Ыттисенни пекех, вăл пăхакан ушкăнри ĕнесем чылайăшĕ хальхи вăхăтра пăрулас умĕн сĕт пăрахнă. «Апла пулин те, куллен 400 литра яхăн сĕт суса илетĕп. Пăрулана май, ĕнесем сĕт хушсах пыраççĕ»,–хавхаланчĕ вăл.

Унпа юнашар ретри ĕнесене пăхакан Светлана Иванова доярка та «Кубнинский» агрофирма йĕркеленнĕрепех çĕнĕрен фермăра. 52 чун пăхать: сăвакан ĕнесем, пăрулామалли пушмаксем, пĕр вăкăр. Паллах, тинтерех кун çути курнă пăрушкасем те пур унăн тимлĕхĕнче – сĕт «ачисене» малтанхи çирĕм кунччен дояркăсем хăйсем пăхаççĕ. Светлана – Ольга Васильевнăпа Михаил Александрович Репейкинсен хĕрĕ. Ольга Васильевна хăй вăхăтĕнче Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа ялĕнчен качча килнĕ Киччĕ ялне. Çирĕм виççĕре пулнă вăл ун чухне. «Чиперех пурăннă. Анчах мăшăрăм çĕре кĕнĕренпе чĕрĕк ĕмĕр иртрĕ, кăçал çирĕм ултă çул çитрĕ»,–ассăн сывласа илчĕ фермăра пăрусем пăхакан хĕрарăм. Вăл кăçал туса лартнă витере тăрăшать, Киччĕри Первомайская урамран куллен фермăна васкать. Çапла çултан çул. «Чунпа пĕрмаях фермăра туятăп хама»,– тет вăл. Хальхинче те кăнтăрла иртни иккĕсенче çитрĕ фермăна, тумтирне улăштарса тÿрех ĕçе пуçăнчĕ. Унăн аллинче çулталанăкчензи тынасем те, вăкăрсем те пур. Хальлĕхе сăнчăрта пурĕ 109 пуç. Çамрăк выльăхсем икĕ ретпе, варринe коридор хăварса, куçа-куçăн тăраççĕ. Вĕсен умне люцернăна вĕтетсе хывнă сенаж хурса панă, ăна çиеççĕ. Кĕçех тележкăпа пусыпка парса тухрĕ Ольга Васильевна, ăна та питĕ хапăл пулчĕç пăрусем. Фуражне, урпапа сĕлĕ хутăштарса авăртнине, тивĕçлĕ нормăна çурмаран пайласа, ирлĕ-каçлă кунне икĕ хутчен параççĕ. Икшер килограмм таран тивет вĕсене фураж. Сăмах майăн каласан, сăвакан ĕнесене виçĕ тĕрлĕ тырăран авăртса хатĕрленĕ пусыпкăна виçшер килограмм параççĕ.

О.Репейкина ĕçлекен витерех сĕтрен тухнă пăрусене те усрама планлаççĕ. Вĕсене валли хăмаран урай сарса тимĕр клеткăсем тунă, ăшăтмалли инфрахĕрлĕ лампăсем те çакса панă. Витере таса та çутă, электричество лампăсене виçĕ ретпе çакса тухнă. «Мускаври пек çутă»,–кăмăллă çакăнпа Ольга Васильевна. Каçхине вара айккисенчисене сÿнтереççĕ, варринчи лампăсен тăрăхне кăна çутă хăвараççĕ. Пĕрех тĕттĕм мар.

Апатласа пĕтерсен, катмакпа пăрусен айĕнчи тислĕке тасатма пикенчĕ. Пенсире пулсан та, хавшакки пĕрре пăхсах курăнать. Ĕç хăвăрт ÿсĕнчĕ. Канава пухăннă тислĕке кайран витерен транспортерпа трактор тележки çине кăлараççĕ, унтан – штабеле. Пăру пăхакана тислĕк тасатма пĕр арçын пулăшрĕ. «Виктор Николаевич Потапов эпĕ, скотник»,–терĕ вăл, мана хăйĕнпе паллаштарса. «Ĕмрипех çак ĕçре эпĕ»,– хушса хучĕ унтан. Çар службинче Польшăра пулнă икĕ çул. Çемьеллĕ. Арăмĕ, Надежда Петровна, хальхи вăхăтра хулара çăкăр пĕçерекенте тăрăшать иккен. Малтан Мучарти ветучасткора ĕçленĕ, ветеринар пулнă.

Скотниксем фермăра иккĕн. Вĕсем икĕ витери выльăхсене куллен апатласа тăраççĕ. Çакă вăл вĕсен тĕп тивĕçĕ. Апата витене тракторпа илсе кĕреççĕ, ĕнесем умне хурса параççĕ. Дояркăсем хутшăнмаççĕ çак ĕçе, ятарласа тытнă çынсем – скотниксем тăваççĕ. Йĕркене пăсмаççĕ, кормораздатчик юсавра пулсан та, вăхăтра апатлама тăрăшаççĕ. Выльăхсем те хăнăхса çитнĕ çакна, кĕтсех тăраççĕ. Лайăх çанталăкра картишне те апат параççĕ, мĕншĕн тесен ĕнесене унта усăлма кăлараççĕ. Картишĕ аслă, ăна тимĕр юпасене цементласа хытарса виçĕ ретлĕ тимĕр пăрăхсемпе тытса çавăрнă. Юлашки кунсенче унта пухăннă тислĕке ферма çывăхĕнчи уя кăларнă.

Фермăри ĕçсене ытларах механизаци вăйĕпе тăваççĕ, ансатлатаççĕ çынсен ĕçне-хĕлне. Шыв башньăран пăрăх тăрăх пырать витесене, тислĕке транспортерпа кăлараççĕ, апата витесене тракторпа илсе кĕрсе валеçеççĕ. Нумай ĕçре Александр Николаевич Афонин механизаторăн тÿпи пысăк пулнине каларĕ Василий Волков. Акара, утçире тата вырмапа кĕракинче ытларах уйра вăл, кĕркуннепе хĕлле – фермăра. Ял ĕçне чунтан-вартан парăннă, кану мĕнне пĕлмен çын вăл. Çакнашкал хастарсен тăрăшулăхĕпе пулаççĕ те çитĕнÿсем.

Сергей Александрович Сорокин оператор пирки те ыррине кăна илтрĕмĕр. Çавăн пекех кунта Николай Иванов механизатор, пушмак пăрусем пăхакан Алина Калистратова, Аркадий Шашков скотник, Андрей Осипов, Александр Иванов, Виктор Иванов хуралçăсем ĕçлеççĕ, пĕрлехи ĕçе тăваççĕ. Паллах, Владимир Гурьевич Рыбкин управляющин тÿпи те пур. Вăл хăй Елчĕк енчен. Агрофирмăра вăй хуракансемпе, унăн вырăнти ертÿçисемпе калаçатăп та, вĕсем маларах асăннă тĕп кăтартусене çирĕплетсе хăварса малалла талпăнмашкăн тĕллев лартаççĕ. Çак шухăш-кăмăла темиçе çынран та илтрĕм эпĕ. Çавăнпа вăхăта та, вăй-хала та шеллемеççĕ хастар ĕçшĕн. Ĕçлекенсене валли канмалли, хывăнса тăхăнмалли пÿлĕмсем, душевой пур, кравватьсем, вăрăм диван, сĕтел-пукан лартса панă. Канмалли пÿлĕмре микроволновкăпа холодильник те, электроплитка та, ыттине те асăрхарăм. Эпĕ ĕне витине пырса кĕнĕ чухне кăнтăрлахи хуралçă Андрей Осипов, вĕсемех ĕне те пăрулаттараççĕ, канмалли пÿлĕмре тăрăшсах яшка сыпатчĕ. Сĕтел çине çавăн пекех кăлпасси, ытти çимĕçсем касса хунăччĕ, куркара чей пăсланатчĕ. Тутăлла ĕçлеме лайăхрах ĕнтĕ.



Александр Афонина Чăваш Ен Пуçлăхĕн парнипе Тав хутне панă вăхăтра (2019 ç., архивран).

**И.ГЛАДКОВ.**